28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
НОЯБРЬ
27
ЫТЛАРИКУН
230 (6981) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховный Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурар

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçленине пула, вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, выльăх-чĕрлĕх шутне чакармарĕç. Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва çителĕклĕ таран выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тата промышленноçа чĕртавар парса тăчĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене срокчен пурнăçласа пычĕç. Çак тĕслĕх вăл колхозлă ялăн тĕрекĕ тата колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмĕ калама çук пысăк пулнине çирĕплетсе парать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн республикăри колхозсем ĕне-выльăх шутне 69 процент, сыснасен шутне 53,7 процент, сурăхсен шутне 165,7 процент ӳстерчĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарса тата ирттерсе тултарса пыракан колхозсен шучĕ кашни çулах çĕршерĕн пулчĕ. Малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе пынипе пĕрлех, вĕсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн те пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси, ама выльăхсем хĕсĕр юлнине тата выльăхсем вилнине пĕтересси парти, совет тата çĕрĕç органĕсен тĕп задачисенчен пĕри пулса тăнине çирĕппĕн палăртрĕç. Чăваш АССР-ĕнчи советпа парти тата çĕрĕç органĕсем 1944 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарайманнине асăрхаттарчĕç. Партипе правительствăн çак кăтартăвне шута илсе, пирĕн республикăри нумай колхозсем кăçал, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнипе пĕрлех, вĕсен ăратлăхне тата тухăçлăхне ӳстерессишĕн çине тăрса кĕрешсе, паллă çитĕнӳсем турĕç.

Кăçалхи 10 уйăх хушшинче, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, пирĕн колхозсем кашни сăвакан ĕнерен 26 литр сĕт ытларах суса илнĕ. Çамрăк выльăхсене те иртнĕ çулхинчен ытларах илсе çитентерчĕ. Кашни 100 ама выльăх пуçне иртнĕ çулхинчен 7 пăру, 200 сысна çури, 46 путек, 10 тиха ытларах илсе çитентерчĕ.

Нумай колхозсем татах та пысăкрах çитĕнӳсем турĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1.713 литр сĕт суса илнĕ. Çак колхозри Чунаева дояркă хăй сăвакан ĕнесенчен 10 уйăхра вăтам шутпа 1.801 литршар сĕт илнĕ. Иртнĕ çулпа танлаштарсан, çак колхозра кашни ĕнерен кăçал 261 литр сĕт ытларах суса илнĕ. Куславкка районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри свинарка Антонина Архипова юлташ хăй пăхакан кашни сысна аминчен 18 çурă илнĕ. Вăрнар районĕнчи «Победа» колхозри сурăх пăхакан Ксения Фурмина кашни сурăхран планпа пăхнă 2 килограмм вырăнне 2,5 килограмм çăм илнĕ. Ишлей районĕнчи «Акара» колхозри сурăх пăхакан Клавдия Чернова юлташ 25 сурăхран 47 путек илсе вĕсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Наркомюст» колхозри чăх-чĕп пăхакан Агафия Скворцова 74 чăхран 5.977 çăмарта илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем республикăра татах та нумай.

Анчах та республикăра кăçал выльăх-чĕрлĕх шутне чакарнă районсем те пур. 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă выльăхсен шутĕнчен Элĕк, Муркаш, Кувакино, Калинино, Октябрьски тата Сĕнтĕр районĕсем ĕне-выльăхсене 4—9 процент таран чакарнă. Çак районсенчи ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем партипе правительство выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кăтартнисене пурнăçлассишĕн колхозниксемпе колхозницăсене кирлĕ пек мобилизацилеме пултараймап, малтанлăха тунă çитĕнӳсемпе лăпланса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç районра мĕнле пынине çирĕппĕн тĕрĕслесе пыман.

Республикăри кашни колхоз умĕнче выльăх-чĕрлĕх планне пур выльăхсем енĕпе те тултарас задачăпа пĕрлех, выльăх-чĕрлĕх ăратлăхне тата тухăçлăхне татăклăнах ӳстерес ответлă задача тăрать. Çак ытла та паха ĕç нумай колхозсенче чăтма çук начар пырать. Уйрăм колхозсенчи фермăсенче выльăх-чĕрлĕхе тата кайăк-кĕшĕке начар пăхнипе пула, вĕсен тухăçлăхĕ калама çук пĕчĕккĕ. Çак сăлтав пирки хăшпĕр колхозсем фермăсенчен пысăк тупăш илес вырăнне, час-часах пысăк тăкаксем курăççĕ. Кăçал Красноармейски, Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар районĕсенче кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 400—500-шер литр кăна сĕт суса илнĕ. Красноармейски районри «Красное Сормово» колхозăн ферминче пурте красногорбатски ăратлă ĕнесем. Ĕнесене чăтма çук начар пăхнине тата тăрантарнине пула, кунта кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 300-шер литр кăна сĕт суса илнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Самолет» колхозра выльăх апачĕ те çителĕклĕ, сууртйĕрсем те начар мар. Анчах та фермăра ĕçлекенсене вĕсем мĕн чухлĕ сĕт илмеллине та та планран ирттерсе сĕт илсен ĕçкунĕ мĕнле тӳленине ăнлантарса паманнине пула, ĕçре пурне те пĕр пек тӳлемелли йĕрке пулнă пирки, кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 359-шар литр кăна сĕт илнĕ. Куславкка районĕнчи «Трактор» колхозра юлашки вăхăтра кăна 18 сысна амп, 105 чăх, 5 сурăх вилнĕ. Уйрăмах республикăри нумай колхозсенче кайăк-кĕшĕк фермисем çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли плана Пăрачкав районĕ 22,4 процент, Кувакино районĕ 25 процент, Улатăр районĕ 24,6 процент кăна тултарнă. Кайăк-кĕшĕк тухăçлăхĕ те ытла та пĕчĕккĕ. Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем кашни чăхран кăçал пурĕ те 11-шер çăмарта кăна илнĕ. Çак районри «Искра» колхозра кашни чăхран 8 çăмарта, «Самолет» колхозра 2 çăмарта кăна илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем вĕсем кайăк-кĕшĕк ферминче нимĕнле йĕркелĕх те çукки çинчен уççăнах калаççĕ.

Кашни фермăрах çирĕп йĕрке, тивĕçлĕ учет пулмалла. Колхоз правленийĕсен вăхăтран-вăхăта кашни фермăрах ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла.

Колхозри ферма—колхозăн пуянлăхĕ, колхоз тупăшĕн çăлкуçĕ. Çакна кашни колхозăн яланах асра тытмалла. Выльăхсене лайăх пăхассине, апатлантарассине кирлĕ пек организацилемелле. Фермăра ĕçлеме чи лайăх та шанчăклă çынсене уйăрмалла, вĕсен ĕçне пĕтĕмпех сдельщинăпа йĕркелемелле.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем, районри çĕрĕç пайĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йĕркелĕхпе учета çирĕплетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле. Колхоз пуянлăхĕпе тивĕççĕр усă курма пăхакансене пĕр хĕрхенмесĕр ответ тыттармалла. Выльăх-чĕрлĕх шутне тата тухăçлăхне ӳстерессишĕн ферма работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарса ямалла. Партипе правительство колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен йышăннă постановление кашни колхозника, уйрăмăнах фермăра ĕçлекен работниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Хамăрăн вăй-хала, пĕлĕве хĕрхенмесĕр ĕçлесе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре çитĕнӳсем тăвасси—пирĕн хисеплĕ те чыслă тивĕç, пуриншĕн те ответлă та паха задача пулса тăрать.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Национальноçсен Советне Чăваш АССР-ĕнчен депутатсем суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетесси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ ноябрĕн 25-мĕшĕнчи номерте)

562-мĕш НОМЕРЛĔ УЛАТĂР СУЙЛАВ ОКРУГĔ ТĂРĂХ

Округри суйлав комиссийĕн председателĕ Василий Николаевич **Козляковский** — Улатăр заводĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ Лидия Ивановна **Москвина**—пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Кувакино районĕнчи организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Пина Ефимовна **Куликова**—пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Улатăр районĕнчи организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Татьяна Федоровна **Дульцева**—Хусан чугун çулĕн Улатăр станцийĕнчи паровоз служби 3-мĕш отделенийĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Мария Ивановна **Кольцова** — Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Евгения Афанасьевна **Куликова**—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Улатăр районĕнчи организацийĕнчен.

Михаил Григорьевич **Мичурин** — Улатăрти 7-мĕшпе 8-мĕш хăма çуракан заводсенчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Борис Николаевич **Морозов**—Улатăр районĕнчи коммунистсен организацийĕнчен.

Иван Андреевич **Серов**—Кувакино районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Иван Степанович **Сизенков**—Кувакино районĕнчи «Путь Ильича» колхозри колхозниксенчен.

Анна Карповна **Тюрина**—Кувакино районĕнчи «Ударник» колхозри колхозниксенчен.

563-мĕш НОМЕРЛĔ ВĂРНАР СУЙЛАВ ОКРУГĔ ТĂРĂХ

Округри суйлав комиссийĕн председателĕ Павел Степанович **Саперов**—Вăрнарти заводри рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ Феофан Прокопьевич **Михеев**—Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Ольга Давыдовна **Давыдова**—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Вăрнар районĕнчи организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Федор Антонович **Антонов**—Элĕк районĕнчи «Красная заря» колхозри колхозниксенчен.

Людмила Петровна **Доброва** — медсантруд работникĕсен профсоюзĕн Калинино районĕчи организацийĕнчен.

Алексей Емельянович **Емельянов**—Калинино районĕнчи «Çутталла» колхозри колхозниксенчен.

Вера Ивановна **Иванова**—пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Элĕк районĕнчи организацийĕнчен.

Касьян Никитич **Никитин**—Элĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Петр Никитич **Никитин**—Калинино районĕнчи коммунистсен организацийĕнчен.

Федор Семенович **Никонов**—МТС-семпе çĕрĕç органĕсен работникĕсен профсоюзĕн Чăваш республикинчи организацийĕнчен.

Зинаида Алексеевна **Павлова**—медсантруд работникĕсен профсоюзĕн Вăрнар районĕнчи организацийĕнчен.

564-мĕш НОМЕРЛĔ ÇĔМĔРЛЕ СУЙЛАВ ОКРУГĔ ТĂРĂХ

Округри суйлав комиссийĕн председателĕ Петр Илларионович **Илларионов** — Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ Андрей Аристархович **Петров** — пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Çĕмĕрле районĕнчи организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Александр Степанович **Степанов**—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи коммунистсен организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Федор Тимофеевич **Афондеркин**—Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи рабочисемпе служащисенчен.

Петр Алексеевич **Воробьев** — Пăрачкав районĕнчи «Борьба за социализм» колхозри колхозниксенчен.

Антонина Андреевна **Здорова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Чăваш республикинчи организацийĕнчен.

Иван Петрович **Кузнецов**—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» колхозри колхозниксенчен.

Клавдия Ивановна **Милорадовская** — пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Çĕмĕрле хулинчи организацийĕнчен.

Екатерина Михайловна **Ортикова**—Çĕмĕрлери торфопредприятири рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Иван Осипович **Осипов**—Çĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхозри колхозниксенчен.

Евгения Кондратьевна **Симсова**—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Çĕмĕрле районĕнчи организацийĕнчен.

565-мĕш НОМЕРЛĔ ЕТĔРНЕ СУЙЛАВ ОКРУГĔ ТĂРĂХ

Округри суйлав комиссийĕн председателĕ Калистрат Никитич **Кудряшов** — Советски районри коммунистсен организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ Евдокия Нестровна **Кузьмина**—Етĕрне районĕнчи «Сура» колхозри колхозниксенчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Иван Егорович **Ярадайкин**—Етĕрнери педагогика училищинчи преподавательсенчен тата рабочисемпе служащисенчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Юрий Иванович **Бурашников**—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Етĕрне районĕнчи организацийĕнчен.

Василий Варламович **Варламов**—Муркаш районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Иван Герасимович **Герасимов**—Муркаш районĕнчи «Совет» колхозри колхозниксенчен.

Мария Арсентьевна **Новикова**—Етĕрнери спирт заводĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Нина Андреевна **Петрова** — Муркаш районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри колхозниксенчен.

Василий Михайлович **Попов**—Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Алексей Павлович **Пучков**—Советски районри «Радио» колхозри колхозниксенчен.

Агрипина Матвеевна **Юхтанова**—Советски районри «Новый быт» колхозри колхозниксенчен.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕнче

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май тухса тăнă ыйтусене сӳтсе явнă, «СССР Верховный Советне суйламалли Положенипе» килĕштерсе тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕ суйлав документĕсен: участокри суйлав комиссийĕсенче сасăлани çинчен çырмалли протоколăн, суйлавçăсен списокĕн, «Сасăлама ирĕк паракан удостоверени» тăрăх сасăлакан суйлавçăсен списокĕн, Союз Советне суйламалли суйлав бюллетенĕн (вăл шурă пулать), Национальноçсен Советне РСФСР-тан суйламалли суйлав бюллетенĕн (вăл кăвак пулать) тата Национальноçсен Советне Чăваш АССР-ĕнчен суйламалли суйлав бюллетенĕн (вăл кĕрен пулать) чăвашла тексчĕсене çирĕплетнĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕн штампĕпе пичет формине пăхса тухса çирĕплетнĕ

СССР Верховный Советне суйламалли суйлав бюллетенĕсен чăвашла çырнă тексчĕсем

(ШУРĂ ХУТ ÇИНЧЕ)

ССР Союзĕн Верховный Советне суйламалли

СУЙЛАВ БЮЛЛЕТЕНĔ

1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ

Союз Советне суйламалли ________ №________________ округĕ

Суйлав бюллетенĕнчен Хăвăр сасăлакан пĕр кандидат хушаматне анчах хăварăр, ыттисене хуратăр.

Депутата суйламалли кандидатăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ	Депутата суйламалли кандидата кам тăратнă

Союз Советне суйламалли ____________ округăн суйлав комиссийĕн председателĕ

(КĂВАК ХУТ ÇИНЧЕ)

ССР Союзĕн Верховный Советне суйламалли

СУЙЛАВ БЮЛЛЕТЕНĔ

1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ

РСФС Республикинче Национальноçсен Советне суйламалли 15 № Горький суйлав округĕ.

Суйлав бюллетенĕнче Хăвăр сасăлакан кандидат хушаматне анчах хăварăр, ыттисене хуратăр.

Депутата суйламалли кандидатăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ	Депутата суйламалли кандидата кам тăратнă

РСФС Республикинчен Национальноçсен Советне суйламалли Горький округĕн суйлав комиссийĕн председателĕ

(КĔРЕН ХУТ ÇИНЧЕ)

ССР Союзĕн Верховный Советне суйламалли

СУЙЛАВ БЮЛЛЕТЕНĔ

1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ

Чăваш АСС Республикинчен Национальноçсен Советне суйламалли ____ №________ округĕ

Суйлав бюллетенĕнче Хăвăр сасăлакан пĕр кандидат хушаматне анчах хăварăр, ыттисене хуратăр.

Депутата суйламалли кандидатăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ	Депутата суйламалли кандидата кам тăратнă

Чăваш АСС Республикинчен Национальноçсен Советне суйламалли ____________ округĕн суйлав комиссийĕн председателĕ

Муркашпа Шупашкар районĕсем государствăна тырă парса татнă

Вăрнар, Етĕрне, Красноармейски, Элĕк, Сĕнтĕр, Советски тата Чурачăк районĕсем хыççăн Муркашпа Шупашкар районĕсем государствăна тырă парса татнă.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА НОЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	плана тултарнă	Районсем	плана тултарнă
1. Вăрнар	109,9	16. Октябрьски	88,8
2. Етĕрне	103,3	17. Ишлей	88,1
3. Краноармейски	102,1	18. Вăрмар	86,1
4. Элĕк	102,1	19. Канаш	84,8
5. Сĕнтĕр	101,6	20. Комсомольски	82,6
6. Советски	101,4	21. Куславкка	82,1
7. Чурачăк	101,3	22. Йĕпреç	81,4
8. Муркаш	101,2	23. Улатăр	76,0
9. Шупашкар	100,0	24. Хĕрлĕ Чутай	76,0
10. Калинино	99,6	25. Чкаловски	75,3
11. Шăхасан	98,4	26. Первомайски	74,7
12. Çĕрпӳ	97,4	27. Тăвай	69,1
13. Сĕнтĕрвăрри	94,7	28. Çĕмĕрле	67,3
14. Елчĕк	91,0	29. Шăмăршă	60,3
15. Пăрачкав	89.2	30. Кувакино	48,8

Г. Д. Ушинский вилнĕренпе 75 çул тултарас умĕн

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОМИТЕТĂН ЛАРĂВĔ

Çак кунсенче, СССР Педагогика наукисен академийĕн президенчĕ В. П. Потемкин председатель пулса ертсе пынипе, вырăс педагогикин никĕсне хывакан Г. Д. Ушинский вилнĕренпе 75 çул тултарнипе палăртма тунă Пĕтĕм Союзри комитетăн виççĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Г. Д. Ушинские Ленинградра пысăк памятник лартмалла. Памятник проектне хатĕрлеме СССР халăх художникне В. И. Мухинăна хушнă. Кунсăр пуçне, Академи конференц-залне çакмашкăн аслă педагогăн портретне хатĕрлеме тата çутĕç библиотекин вуламалли залне лартмашкăн унăн бронза кĕлеткине хатĕрлеме йышăннă.

Ушинский сочиненийĕсен пуххин пĕрремĕш томне 1946 çулхи январĕн 3-мĕшĕ тĕлне пичетлесе кăлармалла. Çав тома пичете пама хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. Унта Ушинскин 1846-мĕшпе 1856-мĕш çулсем хушшинче çырса пичетленĕ 25 статьине яхăн кĕртнĕ. Ушинскин педагогикăна вĕрентес ыйтусемпе çырнă произведенийĕсен сборникĕ те пичетленсе тухать. Ушинский биографине нумай экземпляр пичетлесе кăлараççĕ. Ушинский çинчен çырнă кĕнекесен библиографиллĕ справочникĕ пичетленсе тухмалла тата шкулсем валли Ушинский портретне пичетлесе кăлармалла.

Ушинский пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен партипе совет активĕ валли тата учительсемпе докладчиксем валли темиçе лекци вуласа пама палăртнă. Мускавпа Ленинградра юбилей ячĕпе выставкăсем организацилеççĕ.

Çав чаплă куна вырăнсенче, уйрăмах та Ленинградпа Киевра, паллă туса ирттерме хастарлăн хатĕрленеççĕ. Январĕн 9-мĕшĕнче Ленинградра чаплă лару туса ирттереççĕ. Киев хулинче Г. Д. Ушинскин вилтăпри çине памятник лартаççĕ.

„1941-1945 çулсенче Отечественнăй аслă вăрçăра хастарлă ĕçленĕшĕн" медальсем илчĕç

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). Ноябрĕн 24-мĕшĕнче райсовет исполкомĕн председателĕ З. Осипов юлташ «1941—1945 çулсенче Отечественнăй аслă вăрçăра хастарлă ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланисене медальсем пачĕ.

Чаплă наградăна илме районри партипе совет работникĕсем, колхозсен тата ял Совечĕсен председателĕсем пуçтарăннă. Чи малтанах наградăна ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. Александров юлташ, ун хыççăн ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ С. Макаров юлташ, районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ В. Марков юлташ, Çĕнĕ Эйпеçри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ К. Воробьев юлташ илчĕç. Ку колхоз государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те срокчен парса татнă, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ. Ун хыççăн наградăна Патрекел ял Совечĕн председателĕ В. Скворцов юлташ илет. Вăл ертсе пыракан ял Советĕнчи виçĕ колхоз та ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ. Государствăна тырпул, çĕрулми парса татнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ытлашшипех тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе те ял Совечĕ лайăх ĕçлесе пырать. Çавăн пекех чаплă наградăна Куштăри «КИМ» колхоз председателĕ И. Измин, районри ветврач А. Улендеев, Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз председателĕ орденоносец В. Зайцев юлташсем тата ыттисем те, пурĕ 23 çын илчĕç.

КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРАР

Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли чи ответлă тапхăр çитрĕ.

Кăçал Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана районсене вăхăтра—октябрь уйăхĕ вĕçĕнче çитерчĕ, ноябрĕн 5-мĕшĕнче вара çак ыйту тăрăх район руководителĕсен республикăри канашлăвне туса ирттерчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ район руководителĕсене ноябрĕн 10-мĕшĕччен рабочисемпе туртăм вăйне вăрмана ĕçлеме яма кăтартса пачĕç. Район руководителĕсен республикăри канашлăвĕ те ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Çакăн хыççăн район руководителĕсем, пуринчен ытларах райсовет председателĕсем, вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕç, ноябрĕн 12—15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вăрмана рабочисемпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран ярĕç, тесе шанма та май пурччĕ. Анчах, тĕрĕссипе илсен, ĕç пачах урăхла тăрать. Хальхи вăхăтра вăрманта ĕçлекен рабочисемпе туртăм вăйĕн хисепĕ пире район руководителĕсем начар ĕçленине кăтартса параççĕ. Çакнашкал япалана малашне пиелле те тÿсме çук, мĕншĕн тесен вăрмана рабочисемпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ ямасан, эпир вăрман хатĕрлемелли государство планне тултараймастпăр.

Вăрманта ĕçлекен рабочисемпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ марри çакăнтан та аван курăнать: Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ кăтартнă план тăрăх, хальхи вăхăтра вăрманта çуран рабочисем 3600 çын, лашаллă рабочисем—2430 çын ĕçлемелле пулсан, ноябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне вăрманта ĕçлекен çуран рабочисем пурĕ те 745 çын, лашаллă рабочисем—458 çын кăна пулнă. Советски, Шăхасан, Чкаловски, Пăрачкав, Тăвай районĕсенчен вăрман касма уйăрнă колхозниксенчен ку таранччен пĕри те вăрмана пыман. Улатăр, Йĕпреç, Красноармейски, Куславкка, Первомайски, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчен уйăрнă колхозниксем вăрманта 10—25 процент таран çеç ĕçлеççĕ.

Райсоветсен исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем мĕншĕн вăрмана рабочисемпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран ямаççĕ-ха? Вĕсем вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе хăйсен ответлăхне манса кайнă, вĕсем ял Совечĕпе колхоз председателĕсене вăрман касма уйăрнă рабочисемпе туртăм вăйне пĕтĕмĕшпех ĕçлеме ямашкăн хистемеççĕ. Хăшпĕр район руководителĕсем государствăн çак пысăк та ответлă ĕçĕ çине çителĕклĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ-ха. Тепĕр енчен, вăрман касма уйăрнă рабочисемпе туртăм вăйне пĕтĕмĕшпех вăрмана яманни—уйрăм райсоветсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем вăрман хатĕрлесси хальхи вăхăтра политикăллă пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илме шутламаннине кăтартса парать.

Рабочисемпе туртăм вăйĕ вăрмана çителĕклĕ таран тухманнине тата Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн автомобильсемпе трактор паркĕ тивĕçлĕ ĕçлеменнипе 1945-мĕш çулхи IV-мĕш квартал планне касас енĕпе 9 процент, турттарас енĕпе 7,8 процент, вăрмансене сыхлакан управлени тăрăх: касас енĕпе—15 процент, турттарас енĕпе—4 процент, вырăнти топливо промышленноçĕн управленийĕ тăрăх: касас енĕпе—44 процент, турттарас енĕпе—17 процент кăна тултарнă.

Вăрман хатĕрлес ĕçре уйрăмах шахтăсене çирĕплетме кирлĕ йывăç, экстракт валли кирлĕ юман вутти. Сĕмĕрле комбиначĕ валли кирлĕ юман кĕрешĕсем хатĕрлесси япăх пырать. Сăмахран, ноябрь уйăхĕнче шахтăсене çирĕплетме кирлĕ йывăçа пурĕ 20.000 кубометр турттармалла пулнă пулсан, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 1.260 кубометр кăна турттарнă. Экстракт валли кирлĕ юман вутти хатĕрлес тĕлĕшпе—IV-мĕш квартал планне касас енĕпе 13 процент, турттарас енĕпе 8 процент кăна тултарнă.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăри предприятисем тата колхозниксемпе колхозницăсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç пулсан, вĕсем çĕршыва кирлĕ строительство материалĕсене çителĕклĕ таранах парса тăчĕç пулсан, хальхи вăхăтра, мирлĕ строительство вăхăтĕнче, эпир мĕншĕн-ха çав тери начар ĕçлетпĕр?

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Çакăншăн пуринчен ытларах район руководителĕсем айăплă. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ темиçе хутчен кăтартса панă пулин те, вĕсем çак тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, çак пахаран та паха ĕçе вĕсем хăйсен аллине илмен.

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе IV-мĕш квартал планне тултарманшăн вăрман касса хатĕрлекен предприятисен руководителĕсем те айăплă. Вĕсем ку тарана çитсе те хăйсен предприятийĕсем валли рабочисемпе туртăм вăйĕ тупас, автомобильсемпе тракторсен паркне лайăх ĕçлеттерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман.

Вăрман хатĕрлеме çитес вăхăтрах кирлĕ таран рабочисемпе туртăм вăйĕ ярас тесен мĕн тумалла-ха?

Вăрман касма уйăрнă рабочисене (çуранисене те, лашапа ĕçлекенсене те) çак икĕ кун хушшинчех вăрмана ĕçлеме ямалла. Вăрман хатĕрлес енĕпе кашни колхозпа ял Советнех татăклă плансем памалла, малашне вĕсем çав плансене епле тултарса пынине тĕрĕслесе тăмалла. Вăрман касма уйăрнă колхозниксемпе каласусем туса ирттермелле, вĕсене хăйсен ĕçĕсем çинчен, вăрманти ĕç йĕркисем çинчен, кулленхипе уйăхри тата сезонри ĕç нормисем çинчен, вăрманта тăрăшса ĕçленĕшĕн ĕçукçи мĕн чухлĕ хушса тÿлени çинчен лайăх ăнлантарса памалла.

Вăрмана колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене ямалла, вĕсене вăрманта ĕçленĕшĕн ĕçукçисĕр пуçне ĕçкунĕсем пани çинчен ăнлантарас пулать.

Юлашкинчен, ял Совечĕпе колхоз председателĕсене вăрмана кайма уйăрнă çынсене çак кунсенчех ĕçлеме ямашкăн хистесе тăмалла. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн ял Совечĕсемпе колхозсен председателĕсем ответлă. Тĕрлĕ сăлтавсем çине ярса хăйсен планне тултармасăр тăракан председательсене çирĕп ответ тыттармалла.

Районсен, ял Совечĕсен, колхозсен, вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх вăл — вăрманта ĕçлеме уйăрнă рабочисемпе туртăм вăйне нумай вăхăтлăха çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе çак таранччен те кирлĕ мерăсем йышăнманни пулса тăрать. Вăрманта ĕçлеме уйăрнă рабочисем нумай çĕрте кăштах ĕçленĕ хыççăнах килĕсене пăрахса каяççĕ, çакă вара вăрман хатĕрлемелли плана тултарма чăрмантарать. Кăçал çак çитменлĕхе тĕппенех пĕтермелле.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем çакна ăнланаймаççĕ: вăрманта ĕçлеме уйăрнă колхозниксем вăрмантан час-часах киле таврăнни колхоза пысăк тăкак туртарать, вăл лашасене начарлатса вăйсăрлатать. Сăмахран, Куславккапа Октябрьски районĕсенех илер. Асăннă районсенчи колхозниксен 150 çухрăм аякка кайса Буинск вăрманпромхозĕнче ĕçлемелле. Çакнашкал инçетрен час-час киле таврăннипе ку районсенчи колхозниксем колхоза расход тутарттарнисĕр пуçне çак вăрăм çула каллĕ-маллĕ хутласа вăхăта сая яраççĕ.

Час-часах колхозниксем: эпир лаша апачĕ пĕтнĕ пирки киле таврăнтăмăр, теççĕ. Анчах çакна çăмăллăнах пĕтерме пулать: лаша апатне вăрмана яланах пĕр çыннăн турттарса тăмалла тăвас пулать, вара вăрманта ĕçлеме уйăрнă лашасем каллĕ-маллĕ усăсăр хутласа ывăнман пулĕччĕç, колхозниксем те хăйсен вăхăчĕпе тĕрĕс усă курса плана срокченех тултарнă пулĕччĕç.

Хăшпĕр районсенчи колхозниксем вăрманта 1—2 кун ĕçленĕ хыççăнах тĕрлĕ сăлтавсем тупса каялла таврăнаççĕ. Вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн. Вăрнар районĕнче çакăн пек çитменлĕх пурри палăрчĕ: çак районти колхозниксем вăрманта пĕри те эрнерен ытла ĕçлемен, вĕсем тĕрлĕ сăлтавсем тупса, хăш чухне тата пĕр сăлтавсăрах, вăрманта 2—3 кун ĕçленĕ хыççăнах каялла килĕсене таврăннă.

Çакнашкал çитменлĕхсем ытти районсенче те пулкалаççĕ. Вĕсем пурте районсемпе ял Совечĕсен тата колхозсен руководителĕсем вăрман хатĕрлеме уйăрнă колхозсене вăрманта чылай вăхăт ĕçлеттерессишĕн, ĕçе лайăх организацилесе ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн тăрăшманнине кăтартаççĕ.

Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлес ĕçе тĕпренех аванлатас тесен, мĕн тумалла-ха?

Çак тĕлĕшпе вăхăта тăсмасăрах плана тултарма çителĕклĕ таран вăрмана рабочисемпе туртăм вăйĕ ярас пулать. Çакăнпа пĕрлех автомобильсемпе тракторсен паркĕн ĕçне лайăхлатмалла, касса хатĕрленĕ вăрмана турттарма çулсем тумалла.

Лучковăй тата моторлă пăчкăсемпе ытларах усă курса ĕçлеме тăрăшмалла, мĕншĕн тесен вĕсем ĕç тухăçлăхне нумай хăпартаççĕ. Вăрманта ĕçлекен рабочисене кулленех лайăх та çивĕч ĕç хатĕрĕсем памалла.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсен хальхи вăхăтра пуринчен ытларах шахтăсене çирĕплетме кирлĕ йывăçпа экстракт валли кирлĕ юман вутти касса хатĕрлеме тата турттарма ытларах тăрăшмалла. Вăрмана пыракан рабочисемпе туртăм вăйне чи малтан çак ĕçе лартмалла.

Кунта çакна асăрхаттармалла: шахтăсене çирĕплетме кирлĕ йывăçпа экстракт валли кирлĕ юман вутти касса хатĕрлес тата турттарас ĕç епле пынине Чăваш АССР Совнаркомĕ хăй тĕрĕслесе пырать, вĕсене касса хатĕрлессишĕн тата турттарассишĕн пĕтĕмĕшпех вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсемпе район руководителĕсем ответлă пулаççĕ.

Вăрман касма уйăрнă колхозниксемпе колхозницăсене вăрманта плана тултаричченех ĕçлеттерес тĕлĕшпе вăрмана кашни районрах пĕрер ответлă работник ямалла. Вăл работникăн районран пынă колхозниксемпе колхозницăсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма, вĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыма пулăшмалла.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсемпе парти организацийĕсен вăрманта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем валли пурăнма лайăх условисем туса памалла, нормăна ытлашшипех тултаракансене тĕрлĕ промтоварсем памалла. Вăрманта ĕçлекенсем валли паракан çимĕçсемпе, тĕрлĕ промтоварсемпе пур çĕрте те тĕрĕс усă курас пулать.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсен, инженерĕсен, техникĕсен, мастерĕсен кулленех рабочисем хушшинче пулма, вĕсен ĕçне тĕрĕс организацилеме, ĕç тухăçлăхне кулленех хăпартса пыма тăрăшмалла.

Вăрманта ĕçлекен рабочисем хушшинче вăрман промышленноçĕнчи работниксен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине тĕплĕн сÿтсе-явмалла. Ăна рабочисем хушшинче кăна мар, кашни колхозрах уйрăмăн сÿтсе-явса, вăрман хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарас тĕлĕшпе обязательствăсем йышăнмалла, вара çав обязательствăсене вăхăтра тултарассишĕн кĕрешмелле.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсемпе парти организацийĕсен вăрман хатĕрлесе турттармалли плансене кашни колхоз, кашни рабочи уйрăмăн епле тултарса пынине кулленех шута илмелле, плана кам мĕнле тултарни çинчен вĕсен кашни 5—10 кун хушшинчех районран пынă работника пĕлтерсе тăмалла. Кунсăр пуçне, вĕсен стахановецсене пур енчен те пулăшса пырса, вĕсен опычĕсене анлăн сармалла, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле, массăллă-политикăллă ĕçсене туса пымалла.

Совет Союзĕн Верховный Советне суйламалли куна пирĕн пĕтĕм халăх Ленин—Сталин партийĕ тавра, юратнă çулпуçăмăр аслă Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕçсе кĕтсе илет. Пĕтĕм совет халăхĕ çак суйлава социализм строительствин пур пайĕсенче те производствăллă çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илет. Пирĕн умра тăракан задача—ĕçхалăхĕн пĕтĕм вăй-халне мобилизацилесе государство планĕсемпе заданийĕсене тултарасси пулать. Çакна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли планăн 75 процентне суйлав кунĕ тĕлне (1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне), планăн юлашки 25 процентне 1946 çулхи мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултармалла тесе решени йышăнчĕç. Çакна эпир пурнăçлама пултаратпăр. Ăна тăвас тесен, пирĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, вăрман хатĕрлекен предприятисенчи рабочисемпе вăрманта ĕçлеме уйăрнă колхозниксен мĕнпур вăйне мобилизацилес пулать.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

Ноябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи лару

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн ноябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Америка енчен айăплакансен представителĕ Додд сăмах каланă. Вăл гитлеровецсем влаçа хăйсен аллине тытса илнĕ хыççăн Германи мĕнле хĕçпăшалланни çинчен каласа панă.

Питĕ нумай документсенчен, çав шутра Америкăпа Англи çарĕсем Эссен хулинче Крупп архивĕнче тупнă документсенчен уйрăм вырăнсене вуласа парса, вăл Германи ют çĕршывсене тапăнма хатĕрленес ĕçре концернсем, çав шутра Крупп фирми те, мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартса парать. Ют çĕршывсене тапăнма экономика тĕлĕшĕнчен хатĕрленес ĕçре Геринг, Шахт, Функ тата Крупп уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Айăплакансен представителĕ çав Крупп меморандумĕнчен хăшпĕр вырăнсене илсе вуласа парать. Çав меморандумра Германин çар промышленноçне активлăн ура çине тăратнăшăн Германири 25 промышленника Гитлер тав туни çинчен каланă.

Айăплакан çапла калать: 1933 çулхи апрельте Густав Крупп Германин пĕтĕм промышленноçне вăрçă валли ĕçлеттермелли тата ăна Гитлер государствин тĕллевĕсене пурнăçлаттармалли план çырса хатĕрленĕ. Çав вăхăтра Густав Крупп Германири промышленниксен союзĕн председателĕ пулнă. Хăйĕн меморандумĕнче вăл пĕтĕм промышленноçа Гитлер партийĕн политикăллă тĕллевĕсемпе килĕштерсе майлаштарма сĕнет. Вăл пĕтĕм промышленноçра «фюрерсем лартас» принципа пурнăçа кĕртмелли çинчен калать. Çак меморандумпа усă курса вара 1944 çулта закон йышăннă. Çав закон тăрăх пĕтĕм промышленноçа уйрăм ушкăнсене пайланă, кашни ушкăн пуçне «фюрер» тăнă. Крупп çырнă документсенчен пĕринче нимĕç предпринимателĕсем Гитлер партийĕ хушнисене пурне те савăнса йышăнни çинчен каланă.

1933 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче Германи правительстви оборона совечĕ тума йышăннă, тет Додд. Çав советăн вăрçă пуçлама пĕтĕм экономикăпа халăха вăрттăн мобилизацилемелле пулнă. Çав оборона совечĕн пĕр ларăвĕнче айăпланакан Кейтель оборона совечĕн пĕр документне те çухатмалла марри çинчен çирĕп каласа панă. Кейтеле хÿтĕлекен ирхи ларура оборона совечĕ пулман тесе каланине хирĕç Додд çав советăн ларăвĕсем тăтăшах пулса пынине документсемпе кăтартса парать. Çав оборона совечĕн рабочи комитет текен орган та пулнă. Рабочи комитетăн пĕр ларăвĕнче, документсем кăтартнă тăрăх, Бек генерал-лейтенант, айăпланакан Иодль, Варлимонт генерал-майор тата ыттисем те пулнă.

Айăплакансен представителĕ 1944 çулхи январь уйăхĕнче Крупп каланă сăмахăн хăшпĕр пайĕсене вуласа парать. Çав сăмахра Крупп Германи промышленноçне мухтанă, унта вăл çав промышленность, 1919 çултанпа вăрттăн ĕçлесе тăрса, вăрçа наукăпа экономика енчен хатĕрленес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç туни çинчен каланă. 1933 çул хыççăн гитлеровецсем Германие вăрçă пуçлама пултаракан çĕршыв тăвас задача лартнă. 1935 çулхи май уйăхĕнче оборона совечĕ тăвасси çинчен закон йышăннă, анчах ăна пичетлесе кăларман. Рейхсбанк президенчĕ пулнă Шахта, халь айăпланаканскере, вăрçă экономики тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй уполномоченнăй туса хунă. Çав вырăнта ĕçлесе, Шахт вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе питĕ нумай ĕç тунă, уйрăм илсе кăтартсан, вăл Германие таварсем илсе килнине тата унтан илсе тухнине контроллеме пуçланă, стратегиллĕ материалсен запасне тăвас ĕçе хăвăртлатнă, «МЕФО» («Металльфоршунг» — металсене тĕпчекен общество) ятлă суя общество туса хунă. Çав общество вăрçа хатĕрленес ĕç валли вăрттăн укçа парса тăнă. Унăн акцийĕсем пирки государство шантарнă, вĕсене пур предприятисене те салатнă. Çав общество вăрçа хатĕрленмешкĕн 12 миллиард марка укçа панă. Унăн акцийĕсене ют çĕршывсенче те сарнă. Каярахпа Шахт Германи хăйĕн тăшманĕсен укçипе хĕçпăшалланчĕ, тесе мухтанă.

Малалла айăплакан ак çакна документсемпе çирĕплетсе парать: Шахт Рейн облаçне часрах çĕнĕрен çарсем ярттарасшăн пулнă тата Австрие тытса илессишĕн тăнă. Германи концернĕсем, çав шутра Крупп фирми те, гитлеровецсен ют çĕршывсенчи шпионла тата пропагандистла ĕçне активлăн хутшăннă. Крупп фирмин ют çĕршывсенчи пур отделенийĕсене те çавăн пек тума хушнă. Австрие тытса илнĕ хыççăн Германи хĕçпăшалланас тĕлĕшпе икĕ хут вăйлăрах ĕçлеме пуçланă. 1938 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче Геринг çапла каланă: Гитлер мана Германие хĕçпăшаллантармалли çав тери пысăк программăна пурнăçа кĕртме хушрĕ; çав программа шайĕнчен шутласан, халиччен тунă ĕçсем питĕ пĕчĕккĕ курăнаççĕ, тенĕ. Айăплакан, çакăн çинчен каласан, Германире хурçă тăвасси тата синтетически материалсемпе хĕçпăшалсем тăвасси мĕнле ÿссе пынине кăтартса панă.

Айăплакан çапла калать: Шахт 1939 çулта гитлеровецсемпе хирĕçиппе пула мар вырăнтан тухнă. Томас генерала янă çырăвĕнче вăл Германие хĕçпăшаллантарас ĕçре тунă çитĕнÿсемпе хăй кăмăллă пулни çинчен каланă. 1939 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче Гитлер Шахта çапла çырнă: «Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарас ĕçре Эсир çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнă пирки Сирĕн ятăра яланах хисеплĕç», тенĕ.

Каçхи лару пĕтеспе Америка енчен айăплакансен тепĕр представителĕ Олдермен сăмах тухса каланă. Вăл гитлеровецсем пĕтĕм тĕнчепе этемлĕхе хирĕç каварлашнине кăтартса панă. Вăл ют çĕршывсен çĕрĕсене тытса илес ĕçре усă курнă меслетсене ирсĕр меслетсем тесе ят панă. Вăл тата айăпланакансем пĕтĕм тĕнчене хирĕç тунă каварлашăва хутшăннине кăтартса панă. Айăплакансен представителĕ гитлеровецсем ют çĕршывсене тапăнма 1933 çултан пуçласа мĕнле хатĕрленнине кăтартса панă.

Лару вĕçĕнче хÿтĕлекенсен представителĕ çав айăплакана чарнă та судра вуласа паракан нимĕç чĕлхипе çырнă документсене хÿтĕлекенсене пама ыйтнă; тĕрĕссипе каласан, хÿтĕлекенсем нумайĕшĕ акăлчанла лайăх пĕлеççĕ, кунсăр пуçне тата вĕсем залра калакан сăмахсене нимĕçле куçарса панине итлеме пултараççĕ. Айăплакан çапла каланă: хÿтĕлекенсем пур документсен ÿкерчĕкĕсене те илĕç, тенĕ.

Трибуналăн тепĕр ларăвĕ тунтикун, ноябрĕн 26-мĕшĕнче пулать, мĕншĕн тесен ноябрĕн 24-мĕшĕнче трибунал документсене хÿтĕлекенсен аллине мĕнле йĕркепе памаллине пăхса тухать.

Германи Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлама хатĕрленнине кăтартакан документ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Айăплакансем ноябрĕн 23-мĕшĕнче трибунала Гитлер ставки пичетлесе кăларнă документсенчен пĕрне куçарса панă. Çав документа 1940 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче çырнă, ăна мĕн пурĕ 9 экземпляр пичетленĕ. Документ çине «питĕ секретлă» тесе çырса хунă. Документăн ячĕ çакăн пек: «21-мĕш номерлĕ директива. Барбаросс планĕ».

«Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене Совет Российине хăвăрт çапса çĕмĕрме хатĕрлемелле, — тенĕ вăл документра, — Совет Российине Англие хирĕç пыракан вăрçă пĕтиччен çапса çĕмĕрмелле (Барбаросс планĕ). Çакна пурнăçа кĕртмешкĕн пирĕн çарăн мĕнпур соединенийĕсемпе усă курмалла, оккупациленĕ территорине сасартăк тапăнасран сыхлама хăваракан соединенисемпе çеç усă курмалла мар. Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă валли сывлăш-çар флочĕн пысăк вăйсем уйăрса памалла, çав вăйсем çĕр çинчи операцисене хăвăрт вĕçлеме май памалла, çапла вара Германин хĕвелтухăç енчи территорийĕсене хăрушлăхран хăтармалла. Тĕп вăйсене хĕвелтухăçнелле ярас ĕçре çакă çеç кăшт чарса тăмалла: вăрçă пымалли пĕтĕм районă, çавăн пекех тата пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем тăракан районсене, хамăр алăра тăраканскерсене, кĕтмен çĕртен сывлăшран тапăнассинчен çителĕклĕ сыхламалла, çавăн пекех тата Англие хирĕç, пуринчен ытла унăн хăйне кирлĕ япаласем турттарса пыракан çулĕсене хирĕç тăвакан атакăсене пĕтĕмпех чарса лартмалла ан пултăр. Тинĕс-çар флочĕн хĕвелтухăçĕнчи вăрçă вăхăтĕнче те пуринчен ытла Англипе кĕрешмелле. Кирлĕ пулса тăрсан, эпĕ Совет Российине хирĕç вăрçă пуçличчен 8 эрне малтан çарсене Совет Российипе вăрçмашкăн пухса тăратма хушăп. Нумай вăхăт хушши хатĕрлемелли ĕçсене, вĕсене халиччен хатĕрлесе çитермен пулсан, халех хатĕрлеме тытăнмалла та 1941 çулхи майăн 15-мĕшĕ тĕлне хатĕрлесе çитермелле. Наступлени тума хатĕрленнине тăшман ан пĕлтĕр тесе, питĕ сыхланса хатĕрленмелле. Верховнăй командованин çак йĕркепе хатĕрленмелле: пĕтĕмĕшле тĕллев кунта çакă пулмалла: вырăссен Хĕвеланăç Российинчи тĕп вăйĕсене хамăрăн танковăй çарсене савăлсем пек нумай шала кĕртсе ярса пĕтерсе тăкмалла, тăшманăн çапăçма пултаракан çарĕсене Российăн калама çук анлă çĕрĕсем çине чакма памалла мар. Вĕсене хăвăрт хăваласа пырса, çакăн пек тĕле çитмелле: вырăссен сывлăш-çар вăйĕсем, çав тĕлтен вĕçсе кайса, Германи империйĕн территорине атакăлама ан пултарччăр. Çак операцин пĕррремĕш тĕллевĕ—Ази Российи тапăнасран Атăл тăрăх тата Атăлпа Архангельск хушшинче оборона линийĕ тăвасси пулса тăрать. Кирлĕ пулсан, Россия аллинче юлнă Уралти юлашки индустри базине пирĕн сывлăш-çар вăйĕсем пĕтерсе тăкма пултарĕç. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртсе пырса, вырăссен Балтика тинĕсĕнчи флотне хăйĕн базисемсĕр тăратса хăвармалла, ăна çапăçма пултарайми туса хумалла. Вырăссен сывлăш-çар вăйĕсем вăйлăн пыра-пыра çапма пултарассипе вăрçă пуçламăшĕнчех хăватлăн пыра-пыра çапса пĕтерсе тăкмалла».

Çав документăн иккĕмĕш пайне çакăн пек ят панă: «Пирĕн союзниксем пулма пултаракан çĕршывсем тата вĕсен задачисем».

Айăплакансем документăн çав пайне пĕтĕмпех сиктерсе хăварнă пулмалла. Вĕсем 4-мĕш страницăри 2-мĕш параграфăн пĕр абзацне çеç илсе кăтартнă. Çав абзацра çапла каланă: «Румынин унта пухса тăратнă пирĕн çарсемпе пĕрле тăшмана чарса тăмалла пулать тата тылра пулăшса тăмалла пулать».

86-мĕш страницăри 4-мĕш параграфран çак вырăна илсе кăтартнă:

«Вăрçа хатĕрленес ĕçе чи малтанхи тапхăрта питĕ сахал офицера хутшăнтармалла. Ытти çынсене çак ĕçе каярахпа çеç хутшăнтармалла тата уйрăм задачăна пурнăçлама кирлĕ пулсан çеç хутшăнтармалла. Апла тумасассăн, эпир вăрçа хатĕрленнине (хăçан хатĕрленсе çитмеллине палăртса хуман-ха) тăшман пĕлме пултарать, вара политикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчен начар результат пулма пултарать. Эпĕ главнокомандующисем, çак инструкциллĕ çыру тăрăх ĕçлесе, малашнехи плансем çинчен каласа парасса кĕтетĕп. Пур йышши хĕçпăшаллă вăйсем те вăрçа хатĕрленни çинчен мана верховнăй командовани урлă пĕлтерсе тăмалла», тенĕ. Гитлер алă пуснă. Çав документ çине тата Иодлĕн, Кейтелĕн, Варлимонтăн тата темле çыннăн ячĕсемпе ашшĕ ячĕсен пуçламĕш саспаллисене çырса хунă. Çав документпа пĕрле меморандум çырса янă, ăна Геринг çырнă пулмалла. Икĕ копирен пĕрне Шуберт генерала янă.

Меморандума 1941 çулхи майăн 2-мĕшĕнче çырнă. Унăн ячĕ çапла: «Государство секретарĕсемпе пĕрле паянхи канашлура Барбаросс пирки калаçнин результачĕсем çинчен çырнă меморандум». Унта çапла каланă: «1) Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнчен пуçласа, мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсене Российăри апат-çимĕçпе тăрантарса тăрсан, вăрçă малалла пыма пултарать. 2) Çĕршывран хамăра кирлĕ япаласене илсен, темиçе миллион çын выçăпа вилесси паллах. 3) Çу кăлармалли ÿсентăран вăррисене тытса илсе турттарса килесси пуринчен пахарах ĕç пулса тăрать, тĕштырă иккĕмĕш вырăнта тăрать. Хĕçпăшаллă вăйсем хăйсем çапăçакан вырăнсенче тытса илнĕ çупа тата какайпа тăранса пурăнма пултарĕç. 4) Промышленноçăн нумай ситмен япаласем тăвакан отраслĕсене çеç çĕнĕрен ĕçлеме пуçлама ирĕк памалла, сăмахран каласан, транспорт хатĕрĕсем тăвакан заводсене, тимĕр завочĕсене, пир-авăр фабрикисене тата Германире çитмен япаласем тăвакан çар завочĕсене çеç ĕçлеме пуçлама ирĕк памалла. Паллах ĕнтĕ, çарсем валли ĕçлекен юсав центрĕсем нумай тумалла. 5) Питĕ анлă çĕр çинче тĕп сыхăнусене сыхласа тăмашкăн хăйне уйрăм çарсем, е импери службине е çарăн резерври соединенийĕсене ямалла. Сыхласа тăмалли чи паха районсене палăртса хумалла.

Меморандума фон Г. тесе алă пуснă».

Вăрман хатĕрлес ĕçе 4 колхоз кăна хутшăннă

МУРКАШ. Вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи сезонĕ пуçланнă май, вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ вăрман ĕçĕнчи мĕнпур работниксене, колхозниксемпе колхозницăсене вăрман хатĕрлесе турттарас ĕçсене срокчен пурнăçлассишĕн СССР Верховный Совет суйлавĕсен ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе каларĕ. Районра малта пыракан «Путь Ильича», «Броневик», «1-ое мая», «Красный Октябрь» колхозсем канашлу чĕнсе калани çине ответлесе, вăрман хатĕрлевне планпа кăтартнă чухлех çынсемпе лашасем уйăрса ячĕç. «Красный Октябрь» колхозран вăрман хатĕрлевĕнче 4 çын лашапа, 4 çын çурран, «1-ое мая» колхозран 3 çын лашапа, 3 çын çурран ĕçлеççĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрман хатĕрлес ĕç районра вăраххăн пулса пырать. Республикăри канашлу чĕнсе каланине пур колхозсенче те сÿтсе-явман. Савна пула паянхи куна вăрман хатĕрлес ĕçе районра пурĕ те 4 колхоз кăна тытăннă, ытти колхозсем вара ку тĕлĕшпе пачах та ĕçлеме тытăнман. «Тиуши» колхозăн (председателĕ Федоров юлташ) 700 кубометр хатĕрлемелле, 600 кубометр турттармалла пулсан, паянхи кун тĕлне вăл пĕр кубометр та хатĕрлемен. Çавăн пекех «Венера», «Родина» тата «Красное Сормово» колхозсем те вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕнле ответлăха та туймаççĕ. Вĕсем ку тарана çитсе те вăрмана ĕç вăйĕ уйăрса яма шутламаççĕ. Асăннă колхозсен руководителĕсем «вăрман хатĕрлевĕ васкамалли ĕç мар-ха, ĕлкĕрĕпĕр», тенĕ сăмахсемпе лăпланса лараççĕ. Çакăн пек шухăшсемпе вăрман хатĕрлевне чăрмантарса пыракансене хирĕç татăклă кĕрешÿ пуçарса ямалла. Районăн вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пырассине пĕтермелле.

Сазонов юлташ вăрман хатĕрлевне чăрмантарать

СĔРПУ. Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине районри колхозсем пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ.

«Богатырь» колхоз вăрмана 6 çын çурран, 6 çын лашапа кăларса янă. «Машинострой» тата «Елаш» колхозсем кашниех 8-шар çын çурран, 4-шар çын лашапа янă. Асăннă колхозсенче вăрман хатĕрлевĕнче лайăх ĕçлекенсене преми пама уйрăм фонд тунă.

Анчах та «Çĕнĕ пурнăç» тата «Малалла» колхозсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе пачах та ĕçлеме тытăнман. «Çĕнĕ пурнăç» колхозăн вăрмана 6 çын çурран, 6 çын лашапа ĕçлеме ямалла пулсан, паянхи куна çитсе пĕр çынна та яман. Колхоз председателĕ Сазонов юлташ вăрман хатĕрлевне хăй чăрмантарса пырать. «Вăрмана ĕçлеме 3 çын ятăм», тесе райплана суя сведени панă.

ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ПАРИЖ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Итали королĕн наместникĕ Умберто принц правительство вырăнтан тухнипе килĕшнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Умберто принц канаш паракан пухăвăн председательне Карл Сфорца тата Парри правительствинче тăнă 5 партин секретарĕсене йышăннă.

ГРЕЦИ РЕГЕНЧĔ ДАМАСКИНОС АРХИЕПИСКОП ХĂЙĔН ВЫРĂНТАН ТУХАТĂП ТЕСЕ ÇЫРСА ПАНĂ ÇЫРĂВНЕ КАЯЛЛА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Греци премьер-министрĕн Софулисăн канцеляри начальникĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: Греци королĕ Георг ыйтнă пирки, Греци регенчĕ Дамаскинос архиепископ хăйĕн вырăнтан тухатăп тесе çырса панă çырăвне каялла илнĕ.

США-ри АВТОМОБИЛЬ ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧЕ 200.000 РАБОЧИ ЗАБАСТОВКА ПУÇЛАСА ЯНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио ĕнер каçхине çапла пĕлтернĕ: ноябрĕн 21-мĕшĕнче США-ра автомобиль промышленноçĕнчи 200.000 рабочи забастовка пуçласа янă. 20 штатри рабочисем ĕçлеме пăрахнă. Вĕсем ĕç укçине 30 процент ÿстерме ыйтаççĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕМ АРГЕНТИНĂНА НЕФТЬ ПРОДУКЧĔСЕМ ЯМА ТЫТĂННĂ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк Геральд Трибюн» хаçатăн корреспонденчĕ Буэнос-Айресран çапла пĕлтерет: çĕнĕ хыпарсем тăрăх Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем пĕр вăхăтра Аргентинăна нефть яма чарнăччĕ, халь Аргентинăна нефть продукчĕсем яма ирĕк панă. Хальхи вăхăтра Буэнос-Айреса 116 пин тонна хутмалли нефть тата 85 пин тонна туса çитермен нефть илсе каяççĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Кĕсре çухалнă, ячĕ — «Улитка», тĕсĕ — турă, 1929 çулта çуралнă. Çав лаша ăçтине пĕлекенсене Вăрнар районĕнчи Кив Яхакассинчи «Пионер» колхозăн правленине пĕлтерме ыйтатпăр.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00463 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.